Муркаш район хаҫачĕ

# Ҫĕнтерӳ ялавĕ

1944 ҫулхи ҫу уйăхĕн 5-мĕшĕнчепе тухать

61-62 (7803-7804) №№ * Шăмат кун, 2010 ҫулхи ҫурла (август) уйăхĕн 7-мĕшĕ * Хакĕ ирĕклĕ

**Августăн 8-мĕшĕ – Строительсен кунĕ**

## Ҫул юсавĕнче хастар

*Эсир ҫак сăн ӳкерчĕксенче «Автодорсервис» чикĕлĕ яваплăхлă обществo ĕҫченĕсене Шурчара пĕр километр тăршшĕ автоҫула тата кунти автобус чарăнмалли вырăна капиталлă юсав тунă вăхăтра куратăр. «Илемлĕ те тикĕс ҫул яла хăт кĕртет», – терĕ кĕске тăхтавра погрузчик машинисчĕ Илья Геронтьевич Федотов (иккĕмĕш сăн ӳкерчĕкре) ĕҫтешĕсемпе паллашма сĕнсе.*

*Хăйсен ĕҫне пĕлсе пурнăҫлакан ҫул-йĕр строителĕсем кашни кăлтăках вăхăтра пĕтерме тăрăшаҫҫĕ.*

*– Нумаях вăхăт иртермĕпĕр, пуҫланă ĕҫе вĕҫлĕпĕр. Ҫавна валли пирĕн умра чăрмавсем ҫук, – савăнăҫлăн хуравларĕ ҫул-йĕр маҫтăрĕ Александр Николаевич Звонков (пĕрремĕш сăн ӳкерчĕкре сулахайри). Юнашар: Светлана Романова рабочи, Евстафий Касеев водитель, Светлана Савельева рабочи).*





**А. БЕЛОВ**
**сăн ӳкерчĕкĕсем.**

## Районăмăр тĕпрен ҫĕнелсе пырать

***Ыран строительсем хăйсен професси кунне паллă тăваҫҫĕ. Ҫак пархатарлă мирлĕ ĕҫ ҫыннисем тăрăшнипе ĕнтĕ пирĕн районăмăр та кунран кун пуянлансах, хитреленсех пырать. Мĕнлерех ҫитĕнӳсемпе кĕтсе илеҫҫĕ вĕсем ҫак уява? Тата епле рех ĕмĕтсемпе пурăнаҫҫĕ строительсем? Ҫак ыйтусем тавра йĕркеленĕ калаҫăва эпĕ район администрацийĕн пуҫлăхĕн ҫумне, капиталлă строительство, архитектура тата пурăнмалли ҫурт-йĕрпе коммуналлă хуҫалăх управленийĕн ертӳҫине В.Г. НИКИТИНА чĕнтĕм.***

**– Владимир Германович, строитель тесенех куҫ умне ҫĕнĕ ҫуртсем тухса тăраҫҫĕ. Ҫурт-йĕр ыйтăвĕ хăй те вăл ҫын пурнăҫĕнче питĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ. Ку енĕпе районта юлашки ҫулсенче нумай ĕҫ туса ирттерни куҫ умĕнчех. Ҫакăнтан пуҫлар-ха калаҫăва.**

– Чăннипех те ялсене ҫĕнетес аталантарас ĕҫ – район администрацийĕ умĕнче тăракан тĕп задачăсенчен пĕри. Кăҫал та ялсенчи обществăлла инфраструктурăна аталантарас, вĕсен архитектура тĕлĕшĕнчи сăн-сăпатне лайăхлатас, территорине тирпей-илем кĕртес, симĕслетес енĕпе нумай ĕҫ туса ирттертĕмĕр. Ялсен сăн-сăпачĕ палăрмаллах улшăнчĕ.

Уйрăм ҫынсен ҫурчĕсем те нумай хута каяҫҫĕ. Ку енĕпе вĕсене районта пурнăҫланакан тĕрлĕ федераллă тĕллевлĕ программăпа социаллă тӳлев парса пулăшатпăр. Ялта пурăнакансем, ялти ҫамрăк ҫемьесемпе ҫамрăк специалистсем «Ялсене 2012 ҫулччен социаллă аталантарасси» программăпа тивĕҫеҫҫĕ ҫак ҫăмăллăхсене. Паянхи куна ялта пурăнакан 7 гражданпа 9 ҫамрăк ҫемье, ҫамрăк специалист ҫак ҫăмăллăха илме май паракан свидетельствăсене илнĕ. Ҫапла вара 2003-2010 ҫулсенче пурĕ асăннă программăпа килĕшӳллĕн 186 свидетельство панă.

Хальхи вăхăтра Аслă Отечественнăй вăрҫă ветеранĕсемпе вĕсен ҫемье членĕсен ҫурт-йĕр условийĕсене лайăхлатас ĕҫ те малалла пырать. Пурĕ ку черете 2005 ҫулхи мартăн 1-мĕшĕ хыҫҫăн 130 ҫынна илнĕ. Вĕсенчен 45 ветеранпа тăлăх арăм ҫурт-йĕрлĕ пулма май паракан свидетельствăсене алла илчĕ ĕнтĕ. Укҫине те куҫарса панă. Ытти ҫемьесем патне свидетельствăсем август-сентябрь уйăхĕсенче ҫитĕҫ.

Социаллă ҫурт-йĕр тăвасси те малалла пырать. Муркашри Парковая урамра юлашки ҫулсенче пĕрин хыҫҫăн тепри нумай хваттерлĕ ҫуртсем ҫĕкленсе ларчĕҫ. Ку енĕпе уйрăмах «Хуҫалăхсем хушшинчи «Моргаушская» строительство организацийĕ» акционерсен хупă обществи тăрăшса ĕҫлет. Кĕҫех 40 хватте рлĕ ҫурта туса пĕтереҫҫĕ вĕсем. Ҫак урамрах нумай хваттерлĕ тепĕр ҫĕнĕ ҫуртăн никĕсне хываҫҫĕ.

**– Юлашки икĕ ҫулта ял тăрăхĕсене комплекслă компактлă майпа тăвас, илем кĕртес ĕҫ те питĕ пысăк утăмсемпе пурнăҫланать республикăра. Ку енĕпе районти мĕнле объектсем ҫĕнелсе сăн-сăпатне улăштарĕҫ?**

– Чăваш Республикин Президенчĕн 2009 ҫулхи январĕн 19-мĕшĕнчи 1-мĕш номерлĕ «Чăваш Республикинчи ял тăрăхĕсене комплекслă компактлă майпа тумалли, илем кĕртмелли пилотлă проекта пурнăҫа кĕртесси ҫинчен» Указĕ вĕрентӳ, сывлăх сыхлавĕн тата культура объекчĕсене тĕплĕ юсама, ҫавăн пекех ялсенчи ҫулсене реконструкцилеме майсем каларса тăратрĕ. Ку енĕпе пилотлă проекта пирĕн районти Оринин, Йӳҫкасси, Ҫатракасси, Москакасси, Чуманкасси ял тăрăхĕсем хутшăнчĕҫ. Иртнĕ ҫул Орининсем ҫĕнтерчĕҫ ку конкурсра. Кăҫал вара Йӳҫкассипе Ҫатракасси ял тăрăхĕсен проекчĕсене суйласа илчĕҫ. Асăннă конкурс пĕтĕмлетĕвĕпе уйăрса панă укҫа-тенкĕне ҫак тĕллевпе усă курма шутларăмăр. Йӳҫкасси ял тăрăхĕпе илсен, Йӳҫкассинчи тата Матьăкри Культура ҫурчĕсене, пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вăтам шкулла, пĕтĕмĕшле практика врачĕн уйрăмне, Панклири, Вăрманкассинчи фельдшерпа акушер пункчĕсене тĕплĕ юсамалла.

Ҫатракасси ял тăрăхĕпе вара Ҫатракассинчи пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вăтам шкул, Ятманти, Очăкассипе Ҫатракассинчи фельдшерпа акушер пункчĕсем тĕпренех ҫĕнелсе улшăнĕҫ.

**– 2008-2011 ҫулсенче граждансене кивĕ тата аварилĕ ҫуртсенчен куҫармалли программа пирĕн районти миҫе ҫемьене ырă хыпар илсе килмелле?**

– Асăннă программăпа килĕшӳллĕн пирĕн района 42945616 тенкĕ уйăрнă. Ҫав суммăпа кăҫал Муркашри, Мăн Сĕнтĕрти тата Москакассинчи 49 ҫемьене аварилĕ ҫуртран кăларса ҫĕнĕ ҫурт-йĕрпе тивĕҫтерме палăртнă.

**– Ҫулсем тăвасси, юсасси, тытса тăрасси те строительсем ҫинчех. Кăҫал ку енĕпе ĕҫсем мĕнле пыраҫҫĕ?**

– Хальхи вăхăтра пĕрер километр тăршшĕ «Волга» – Кăпас», «Волга» – Вăрăмой» автоҫулсене юсас ĕҫ малалла пырать. Ҫак ĕҫсене туса ирттерме 10736073 тенкĕ уйăрнă.

(Вĕҫĕ 7 стр.).

**ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН СТРОИТЕЛЬСТВО КОМПЛЕКСĔН ХИСЕПЛĔ ĔҪЧЕНĔСЕМ ТАТА ВЕТЕРАНĔСЕМ!**

Сире професси уявĕпе саламлатăп!

Эсир – пархатарлă профессии представителĕсем, вăл яланах хисеплĕ те чыслă шутланнă. Аталантару миссийĕ, профессионализм тата ҫынсен пурнăҫне тивĕҫлĕ, хăтлă тăвас туртăм сире вĕҫĕм шыравра пулма тĕллевлеҫҫĕ. Эсир строительствăра чи хăюллă та малта пыракан идейăсемпе усă курса, ҫĕнĕ стандартсене тата технологисене пăхăнса проектласа пирĕн хуласемпе ялсене ҫĕнĕ сăн-сăпат кĕртетĕр. Сирĕн чăн-чăн ăсталăха, пысăк ответлăха, отрасльти специалистсем яланхилле мар ҫĕнĕ йышăнусем тума пултарнине пула тăван Чăваш Ен ҫултан-ҫул улшăнса илемленсе пырать, тĕп хуламăр Шупашкар вара татах илĕртӳллĕрех те хальхи вăхăтпа шайлашуллăрах.

Паян республикăра ҫурт-йĕр строительстви анлă сарăлнă, социаллă сферăн ҫĕнĕ объекчĕсем ҫĕкленеҫҫĕ. Темиҫе ҫул ĕнтĕ Чăваш Енре «Раҫҫей граждансене – юрăхлă та хăтлă ҫурт-йĕр» приоритетлă наци проекчĕ ăнăҫлă пурнăҫа кĕрсе пырать. Ытларах та ытларах ҫамрăк ҫемье хваттер туянать, ҫурт-йĕр ҫавăрать, хăйсен пĕчĕк Тăван ҫĕршывĕнчи пурнăҫне йĕркелет. Чăваш Республикинче граждансене кивĕ тата юхăнчăк ҫуртсенчен куҫарасси те планпа пăхнă пек пулса пырать. Строительство отраслĕн предприятийĕсене инноваци технологийĕсемпе управленин чи ҫĕнĕ мелĕсене пурнăҫа кĕртеҫҫĕ, ҫĕнĕ техникăпа тивĕҫтересси лайăхланса пырать, пысăк проектсем пурнăҫа кĕреҫҫĕ.

Отрасль ĕҫченĕсен профессии тĕлĕшĕнчи компетентлăхĕ, паха опычĕ, ĕҫе чун-чĕрепе парăнни тата тăван ҫĕре юратни малашне те республикăна хальхи вăхăтпа тивĕҫтерекен тата конкуренцие чăтма пултаракан туса хума пулăшасса ҫирĕп шанса тăратăп.

Пурсăра та ҫирĕп сывлăх, ҫĕнĕ ҫитĕнӳсем, телей тата ăнăҫусем сунатăп!

**Н. ФЕДОРОВ, Чăваш Республикин Президенчĕ.**

**ХИСЕПЛĔ СТРОИТЕЛЬСЕМ, ҪАК ĔҪĔН ВЕТЕРАНĔСЕМ!**

Сире пурне те профессии уявĕпе пĕтĕм чун-чĕререн саламлатăп.

Чăннипех те ырă та пархатарлă ĕҫ тăватăр эсир. Сирĕн тăрăшулăхăра пула ĕнтĕ районăмăр ҫулсерен илемленет, пуянланать. Ҫавна май ҫынсен пурнăҫ условийĕсем те лайăхланса пыраҫҫĕ. Эсир ҫĕнĕрен те ҫĕнĕ ҫуртсем ҫĕклетĕр, ҫулсем тăватăр, юсатăр, вĕсене тытса тăратăр. Районти пур ялта та ҫут ҫанталăк газĕ ҫунни те сирĕн ҫаврăнăҫулăх ҫинченех калать. Сирĕн ĕҫ чăннипех те чыслă та хисеплĕ. Район аталанăвĕшĕн ырми-канми вăй хунăшăн тав тăватăп сире.

Эсир малашне те ялсен инфраструктурине аталантарассинче, ҫынсен социаллă пурнăҫне лайăхлатассинче татах та тăрăшарах ĕҫлессе шанатăп. Умри тĕллевĕрсем пурнăҫлансах пыччăр. Ăнăҫу ҫулăра уҫсах пытăр. Пурне те ырлăх-сывлăх, телей, килĕшӳпе юрату, тату пурнăҫ сунатăп.

**Ю. ИВАНОВ, район пуҫлăхĕ.**

**Кĕске хыпарсем**

## Вырма вĕҫленет

Ĕнерхи кун тĕлне 15 хуҫалăхра вырма ĕҫĕсене вĕҫленĕ. Ытти хуҫалăхсенче те вырма ĕҫĕсем юлашки гектарсем ҫине куҫнă. Хиртен пурĕ 5521 тонна тырă кĕнĕ. Гектар пуҫне тивекен вăтам тухăҫ 9,3 центнер. Чи пысăк тухăҫ хальлĕхе «Ударник» хуҫалăхпа (12 центнер) С. Сретинский хресчен (фермер) хуҫалăхĕнче (14 центнер).

Вырма вĕҫленнĕ май хуҫалăхсем кĕр аки валли ҫĕр хатĕрлессипе ĕҫлеҫҫĕ. Ĕнерхи куна 4000 ытла гектар акма ҫĕр хатĕрленĕ ĕнтĕ.

## Апат кӳрсе килеҫҫĕ

Ял хуҫалăх производство кооперативĕсенче вылăх апачĕ ҫителĕксĕррине кура иртнĕ кунсенче район администрацийĕн пуҫлăхĕн ҫумĕ – ял хуҫалăх пайĕн ертӳҫи В. Калинин «Ударник», Ильич ят. хис. хуҫалăх ертӳҫисемпе П. Давыдовпа тата И. Николаевпа Ивановo облаҫне ҫитсе килнĕ. Малтанхи килĕшӳсем тунă.

Унчченхи шыравсемпе ҫурла уйăхĕн 4-мĕшĕ тĕлне района пурĕ 110 тонна утă, 20 тонна ытла улăм, 315 тонна вылăхсене памалли тырă килнĕ те. Чул хула облаҫĕпе кунта Ильич ят. хис. хуҫалăх тăрăшулăх ĕҫлени курăнать.

**Граждансене йышăнаҫҫĕ**

### «Единая Россия» партин Муркаш районĕнчи уйрăмĕн обществăлла йышăну пӳлĕмĕнче граждансене 2010 ҫулхи август уйăхĕнче хăйсен ыйтăвĕсемпе йышăнаҫҫĕ

**Августăн 10-мĕшĕнче** – Юрий Александрович ИВАНОВ, «Пĕрлĕхлĕ Раҫҫей» партин вырăнти уйрăмĕн политканашĕн секретарĕ, район администрацийĕн пуҫлăхĕ.

**Августăн 13-мĕшĕнче** – Лилия Юрьевна ТАРАСОВА, политканаш секретарĕн ҫумĕ, район администрацийĕн йĕркелӳпе кадрсен, право енĕпе тивĕҫтерессин тата вырăнти самоуправлени органĕсемпе ĕҫлекен пайĕн пуҫлăхĕ.

Йышăну 13 – 15 сехетсенче иртет.

Москакасси ял тăрăхĕнчен хыпарлаççĕ

# Хавас кăмăллă уявсем

***Москакассинчи Культура çуртĕнче çулсеренех ял тăрăхĕн территорийĕнче пурăнакансем валли тĕрлĕрен интереслĕ кану каçĕсем сахал мар пулса иртеççĕ. Кăçал та юлашки икĕ уйăх хушшинче савăнăçлă тĕл пулусем сахал мар пулчĕç***

## Тин çуралнисене чысларĕç



Нумаях пулмасть чăннипех те пысăк уяв пулса иртрĕ ашшĕ-амăшĕсемпе вĕсен ачисемшĕн. Культура çурчĕ ачасен хаваслă сассипе тулса ларчĕ. Кунта вара тин çуралнă ачасем те, садике çӳрекен ачасем те, шкул ачисем те сахал мар пуçтарăнчĕç. Мĕнле савăнмăн-ха çак кун? Тин çуралнă ачасене чыслама йыхравланă-çке кунтисене.

Сăмах май, 2009 çулхи июнĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа кăçалхи июнĕн 1-мĕшĕччен пирĕн тăрăхра 37 ача çуралнă. Кăçалхи çур çулта вара 17 ача çут тĕнчене килнĕ. Ку вăл иртнĕ çулхи çав вăхăтрипе танлаштарсан 5 ача чухлĕ нумайрах. Ку пулăм пирĕншĕн питех те пысăк савăнăç. Кил ăшши ача-пăча сассипе тулсан пирĕн малашлăх пулатех.

Чи малтанах ача сачĕн коллективĕ залра ларакансене хăйсен чĕвĕл-чĕвĕл сассипе юрласа тата ташласа савăнтарчĕ. Хыççăн районти ЗАГС пайĕн специалисчĕ Е.Л. Иванова сăмах илчĕ. Вăл Москакасси ял тăрăхĕн территорийĕнче ачасем çуратасси япăх шайра пулманнине палăртрĕ. Вăл çак пепкесен ашшĕ-амăшĕсене саламласа тав сăмахĕ каларĕ. Москакасси ялĕнче пурăнакан Еленăпа Эдуард Спиридоновсем вара, вĕсен ачи кăçал ял тăрăхĕнче çуралнă 100-мĕш пепке пулнă май, ятарлă парнене тивĕçрĕç.

Сцена çинче Москакасси шкулĕ çумĕнчи ташă ушкăнĕ тата Даша Макарова çамрăк юрăç хăйсен илемлĕ ташши-юррисемпе чылай савăнтарчĕç куракансене. Юлашкинчен пепкесен ашшĕ-амăшне хĕрарăмсен канашĕ ячĕпе парнесем парса чыс турĕç.

Залра ларакан ача-пăча та парнесĕр юлмарĕ.

## Çамрăк çемьесем пухăнчĕç

Июлĕн 15-мĕшĕнче Пĕтĕм Раççейри Çемье, юрату тата шанчăклăх кунне паллă турăмăр. Çавра сĕтел хушшинче çамрăк çемьесем пухăнчĕç. Вĕсемпе тĕслĕх библиотекăн библиотекарĕ тата психолог Л.В. Ванюшкина интереслĕ тренинг тата конкурс туса ирттерчĕ. Вĕсене пурне те çемье ыйтăвĕсемпе çыхăнтарнине палăртма кăмăллă. Çамрăк çемьесем пирки интереслĕ кĕнекесемпе паллаштарчĕ.

Кашни кил хуçи хĕрарăмĕ тĕрлĕрен тутлă апат-çимĕç хатĕрлесе илсе килнĕ çак уява. Вĕсем хушшинче чи тутлине суйласа илме çăмăлах пулмарĕ. Çапах та юлашкинчен пурте маттуррисем пулнине палăртрĕç хак паракансем.

Çемье, юрату тата шанчăк кунĕнче вара культура ĕçченĕсем хисепе тивĕçнĕ, пĕр-пĕринпе нумай çул хушши килĕштерсе пурăнакан çемьесене юрă-ташăпа саламлама килĕсене те çитрĕç. Мĕнле çемьесем-ха вĕсем? Акă Мария Степановнăпа Михаил Осипович Осиповсем 64 çул хушши ĕнтĕ пĕр-пĕрне ăнланса тата килĕштерсе пурăнаççĕ. Паянхи куна вĕсем килĕнче иккĕшех шăкăлтатса пурăнаççĕ. Юратнă ачисем Шупашкартан час-часах килсе тăраççĕ, ватă ашшĕ-амăшне яланах пулăшу параççĕ.




Марье кинемей ларма-тăма пĕлмест. Саламлама пыракансене те сĕтел хушшине лартмасăр кăларса ямарĕ. Сĕтел çине вара хăйĕн сим пыл сăрине те, тутлă апат-çимĕçне те кăларса лартрĕ.

Çавăн пекех Москакассинче пурăнакан тепĕр çемьене те çитсе килчĕç культура ĕçченĕсем. Кусем вара çак çул Чăваш Республикин Президентĕнчен Н.В. Федоровран орден илме тивĕç пулчĕç. Вĕсем – Пелагия Васильевна Анатольева тата Петр Иванович Живойкин. Вĕсем Шупашкартан ывăнса таврăннă пулин те, пире кăмăллпах кĕтсе илчĕç. Эпир вара вĕсем çакăн пек пысăк чыса тивĕçнĕшĕн чунтан савăнтăмăр, ташă-юрăпа саламларăмăр, парнесем патăмăр.

## Çумăр пуласса шанса



Çанталăк ытла та шăрăх тăнине кура чылай ялсенчи ватă çынсем уя çумăр ыйтса асăнма пăтă пĕçерсе тухма пуçларĕç. Çак йăлана Москакасси ял тăрăхĕнчи чылай ялсенче те туса ирттерме пуçларĕç: Москакасси, Уйкас Хачăк, Анаткас Хачăк, Ивановка, Ситуккасси тата ытти ялсенче те. Çумăр çукки вара пурне те питĕ хумхантарать. Турă вĕсен сăмахне илтме пултарсан тем пекехчĕ.

**Г. ГОЛУБЕВА,**
**Москакассинчи Культура çурчĕн ертӳçи.**

Вырма

# Ĕç çинче малта

**Районти комиссси вырмана хутшăнакан комбайнерсен июлĕн 30-мĕшĕнчен тытăнса августăн 5-мĕшĕчченхи ĕçĕ-хĕлĕн итогĕсене пĕтĕмлетнĕ. Тĕрлĕ маркăллă комбайнсемпе ĕçлекенсем хушшинче çаксене вырма çĕнтерӳçисем тесе палăртнă: «Акрос-530», «Дон-1500» – «Моргаушская» чăх-чĕп фабрикинчи Н.В. Павлов (1-мĕш вырăн, 222 тонна), «Свобода» хуçалăхри В.А. Соловьев (2-мĕш, 178 тонна), «Герой» хуçалăхри В.В. Ердуков (3-мĕш, 151 тонна), «Вектор», «Полосье», «Енисей-954» – Чкалов яч. хис. хуçалăхри Б.Н. Никитин (1-мĕш, 247 тонна), «Ударник» хуçалăхри В.А. Степанов (2-мĕш, 134 тонна), çав хуçалăхри Ю.А. Васильев (3-мĕш, 133 тонна), «Енисей-1200» – «Оринино» хуçалăхри Ю.С. Иванов (1-мĕш, 88 тонна), çав хуçалăхри Р.В. Ильин (2-мĕш, 66 тонна), «Восток» хуçалăхри С.В. Наумов (3-мĕш, 63 тонна).**

Пенси ыйтăвĕсемпе

# Заявлени çырмасăрах

***Августран тытăнса ĕçлекен пенсионерсен ĕç пенсийĕсене çĕнĕрен шутласа панă. Ĕçлекен пенсионерсен ĕç пенсийĕсен страхланă пайĕсене çĕнĕрен шутласа парассине автоматлă майпа – заявлени çырмасăрах туса ирттернĕ.***

Пенси виçине çĕнĕрен шутласа парасси ватлăха, инвалида тухнине, çемьере тăрантаракана çухатнине пула ĕç пенсийĕ илсе тăракансене пырса тивет.

Ватлăха тата инвалида тухнине пула паракан ĕç пенсийĕсене кашни çулах августăн 1-мĕшĕнчен тытăнса çĕнĕрен шутласа параççĕ. Ун чухне малтанхи çул е пенси шутласа панă е çĕнĕрен шутласа панă чухнехи унччен шута илмен тапхăрта Пенси фончĕ çине куçнă страховани взносĕсене шута илеççĕ. Çемьере тăрантаракана çухатнине пула паракан ĕç пенсийĕн виçине пенси шутласа панă хыççăнхи çултан тытăнса кашни çулах августăн 1-мĕшĕнчен çĕнĕрен палăртаççĕ. Çавăн пекех гражданинăн ирĕкĕпе ватлăха е инвалида тухнине пула паракан ĕç пенсийĕн страхланă пайне урăх кунран тытăнса та çĕнĕрен шутласа палăртма пултараççĕ.

Пенси фондне унчченхи çулсенчи пек ĕç пенсийĕсене августăн 1-мĕшĕнчен тытăнса индексацилесси пирки ыйтусем килеççĕ. РФ Пенси фончĕн Чăваш Республикинчи уйрăмĕн управляющийĕ Роза Кондратьева ăнлантарса панă тăрăх законодательствăпа килĕшӳллĕн хаксем çур çул хушшинче 6 процент чухлĕ ӳснĕ пулсан кăна августăн 1-мĕшĕнчен тытăнса пенсисене индексацилеççĕ. Патшалăх статистикин федераллă служби даннăйĕсем тăрăх вара çулталăк пуçланнăранпа хаксем 4,7 процент кăна ӳснĕ. Çавна май августран тытăнса индексаци пулмасть.

Аса илтеретпĕр: 2010 çул пуçланнăранпа пенсисене икĕ хут ӳстернĕ. Пĕрремĕшĕ – январĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса 2002 çулчченхи стажа тата ĕç укçи виçине кура ĕç пенсийĕсен валоризацине ирттернĕ, иккĕмĕшĕ – апрелĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса ĕç пенсийĕсене 6,3 процент индексациленĕ.

РФ Пенси фончĕн районти управленийĕн даннăйĕсем тăрăх районĕпе ватлăха пула паракан ĕç пенсийĕсен вăтам виçи çулталăк пуçланнăранпа 402 тенкĕ те 39 пус чухлĕ ӳснĕ е 6,1 процент. Социаллă пенсисен ӳсĕм шайĕ апрелĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса 8,8 процентпа, июлĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса 3,4 процентпа танлашнă. Çĕнĕрен шутласа панă май социаллă пенсисен вăтам виçи районĕпе 4287 тенкĕ те 78 пус таран ӳснĕ.

Малтан палăртнă тăрăх 2011 çулта Раççейре пенсисен виçи 9 процент ӳсмелле. Ытларах ӳсĕм вара февраль уйăхĕнчех пулĕ. Кун пирки Раççей премьер-министрĕ Владимир Путин бюджет проекчĕсене хатĕрлес енĕпе ĕçлекен комисси ларăвĕнче пĕлтерчĕ.

**Н. СЕМЕНОВА,**
**РФ Пенси фончĕн районти управленийĕн пуçлăхĕн çумĕ.**

Саламлатпăр

Юратнă мăшăра, аттене, маçака – Ваçкасси ялĕнче пурăнакан **Олег Александрович МАКСИМОВА** 50 çулхи юбилей ячĕпе чун-чĕререн саламлатпăр. Çирĕп сывлăх, вăрăм ĕмĕр сунатпăр сана, хаклă çыннăмăр. Ĕмĕтӳсем çитсе пыччăр, çемйӳнте татулăхпа килĕшӳ хуçаланччăр, сĕтелӳ çăкăр-тăвартан ан татăлтăр, кĕрекӳ тăванусемпе пуян пултăр.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, ывăлĕпе кинĕ, хĕрĕсем, мăнукĕ, çывăх тăванĕсем.**

Юратнă мăшăра, çепĕç чунлă аннене, ырă кăмăллă кукамая, хисеплĕ тăвана – Çатракасси ялĕнче пурăнакан **Зоя Николаевна КИРПИЧНИКОВĂНА** çуралнă кунĕ ячĕпе чĕререн саламлатпăр. Пире, ачисене, ӳстерсе пурнăç çулĕ çине тухма пулăшнăшăн çĕре çити пуç таятпăр. Ĕмĕтленнĕ ĕмĕтӳсем çитсе пыччăр, кĕрекӳ тăванусемпе пуян пултăр, ачусемпе, мăнукусемпе савăнса пурăнмалла пултăр.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, икĕ хĕрĕ, мăнукĕсем, çывăх тăванĕсем.**

Ылтăн-кĕмĕлрен те хаклăрах, хĕвелтен те ăшăрах çыннăмăра – юратнă аннемĕре, хунямана, кукамая – Кашмаш ялĕнче пурăнакан **Зоя Васильевна ДАВЫДОВĂНА** 70 çулхи юбилей ячĕпе чун-чĕререн саламлатпăр. Юратнă аннеçĕм, эпир сана юман пек çирĕп сывлăх, вăрăм кун-çул, çăл куç пек тапса тăракан вăй-хал сунатпăр. Çирĕп сывлăхлă пулса ачăрсене, мăнукăрсене, тăванăрсене савăнтарса пурăнмалла пултăр. Эпир сан умăнта çĕре çити пуç таятпăр.

**Саламлаканĕсем: хĕрĕсемпе кĕрӳшĕсем, икĕ ывăлĕпе кинĕ, мăнукĕсем, çывăх тăванĕсемпе пускилĕсем.**



Хаклăран та хаклă çыннăмăра, аннене, асаннене – Кашмаш ялĕнче пурăнакан **Мария Федоровна МАЙОРОВĂНА** 90 çул тултарнă ятпа чун-чĕререн чи ăшă сăмахсемпе саламлатпăр. Юратнă аннемĕр, ан чирле. Санăн ватлăху канлĕ пултăр, ачусемпе мăнукусем ырлăх кăна кӳччĕр, килçурт ăшши нихăçан та ан сӳнтĕр. Сан умăнта çĕре çити пуç таятпăр. Тавах сана пуриншĕн те, тавах сана эс пурришĕн.

**Салампа ывăлĕпе кинĕсем, хĕрĕсемпе кĕрĕвĕсем, 12 мăнукĕ, 8 кĕçĕн мăнукĕ, çывăх тăванĕсем.**

Августăн 8-мĕшĕ – Строительсен кунĕ

# Районăмăр тĕпрен çĕнелсе пырать

**(Вĕçĕ. Пуçл. 1 стр.).**

Ялсене комплекслă компактлă майпа тумалли тата илем кĕртмелли программăпа килĕшӳллĕн «Автанкасси-Муркаш-Козьмодемьянск-Патаккасси» çула çĕнĕрен тăватпăр. 1,382 км тăршшĕ çак çула çĕнĕрен тума пурĕ 15534134 тенкĕ уйăрнă. Кунти ĕçсене «Аликовская» МСО чикĕллĕ яваплăхлă общество тата ДЭП-146 акционерсен уçă обществи пурнăçлать.

Çула тытса тăрассине те кун йĕркинчен кăлармастпăр. Район балансĕ çинче тăракан 201,329 километр тăршшĕ çула тытса тăма 9834340 тенкĕ уйăрнă. Ку тĕлĕшпе ПГС-1 чикĕллĕ яваплăхлă общество, «Водстрой» ПМК тата ДЭП-146 акционерсен уçă обществисем тăрăшаççĕ. Ял тăрăхĕсене вара 360,525 километр тăршшĕ çула тытса тăма 2837727 тенкĕ уйăрнă.

Çавăн пекех ялсем хушшинчи çулсене тума 715000 тенкĕлĕх проект туса хатĕрлемелле.

**– Çĕнĕ урамсене электрификацилемелли республикăри тĕллевлĕ программа пирĕн районта епле пурнăçланса пырать?**

– Иртнĕ ĕмĕрĕн 90-мĕш çулĕсенче ялсенче чылай çĕнĕ урам хутшăнчĕ. Вĕсене вăхăтлăх линипе çеç электричество парса тăнă. Хăш-пĕр урамсенче пачах çутă пулман. Иртнĕ çул вĕçĕнче йышăннă Чăваш Республикин Президенчĕн Указĕ вара çĕнĕ урамсене электричество парса тăрассине хăрушсăрлатать, çынсен социаллă пурнăçĕпе йăла условийĕсене palăрмаллах лайăхлатать. Унпа килĕшӳллĕн районта пурĕ 52 урама электричество кĕртмелле.

Паянхи куна ку тĕллевпе пурĕ 21257 пин тенкĕ укçа уйăрнă. Ку вăл 20 урама электрификацилеме çитет. Тепĕр 32 урамĕн проектпа смета документчĕсем хатĕр. Вĕсене Минпромэнергона çитернĕ. Çав урамсене те кăçал электричество кĕрессе шанас килет.

**– Чăннипех те кил хуçи мĕнленрех çын пулнине хапха умне çитсенех пĕлме пулать теççĕ. Района пĕрремĕш хут килсе куракансем те чи малтан урамра тӳрех куç умне тухса тăракан ӳкерчĕкрен хаклама пултараççĕ района. Тавралăха тирпей-илем кĕртес, обществăлла инфраструктурăна аталантарас енĕпе тата мĕн тума палăртнă районта?**

– Ку таранччен мĕн пурнăçлани район администрацийĕ ку енĕпе пĕтĕм ĕçе эффективлă тата тĕллевлĕ туса пынине çирĕплетет. Анчах та пирĕн мĕн тунипе лăпланмалла мар. Кăçал пур шайри укçа-тенкĕне шутласан районĕпе пурĕ 26,33 пин тăваткал метр çурт-йĕр хута ямалла. Çав шутран Муркашри Парковая урамри 4 хутлă 40 хваттерлĕ çурта та. Нумай хваттерлĕ çуртсен проекчĕсене хатĕрленĕ чух ачасене валли вылямалли, çынсене канмалли, спорт вăййисем иртермелли вырăнсене те пăхса хăваратпăр. Пурăнмалли çуртсен 80 процентчĕн çак вырăнсем пур. Вĕсен умĕнче çӳп-çап тăкмалли урнăсем, атăпушмак çумалли валашкасем вырнаçтанă. Пур çурт умĕнче тенĕ пекех чечек лартмалли палисадниксем пур.

Район центрĕнче çеç мар, ял тăрăхĕсенче те тавралăха тирпей-илем кĕртес ĕçсене ирттерсех тăраççĕ. Çулсеренех ялсене тирпей-илем кĕртес, симĕслентерес тĕллевпе районта смотр-конкурс ирттеретпĕр.

Район центрĕнчи Çĕнтерӳ паркĕ те юлашки çулсенче тĕпренех улшăнчĕ. Кунта кану вырăнĕсем те çителĕклĕ. Ятарласа «Ачасен хули» те пур.

Муркашри предприятисем, организацисемпе учрежденисем те юлашки çулсенче вĕсен умĕсене архитектура требованийĕсемпе килĕшӳллĕн çĕнетсе илем кĕртрĕç. Юлашки 5 çул хушшинче ку енĕпе нумай ĕç туса ирттертĕмĕр. Малалла та район администрацийĕ çĕнĕ объектсем тăвассине мала хунипе пĕрлех пуррисене те çĕнетсе пырассине куç умĕнчех тытĕ.

**– Калаçу вĕçленсе пынă май професси уявĕ умĕн хăш строительство организацийĕсене ырăпа асăннă пулăттăр?**

– Чи малтанах ман строительсене тав сăмахĕ калас килет. Уйрăмах хамăр районти «Хуçалăхсем хушшинчи «Моргаушская» строительство организацийĕ» акционерсен хупă обществин коллективне. Кăçал вăл кăтартăва иртнĕ çулхинчен палăрмаллах пысăклатрĕ. Çавăн пекех ДЭП-146 акционерсен обществи федераллă, республика, район, ял тăрăхĕсенчи çулсене тытса тăрассипе ăнăçлă ĕçлесе пырать.

Кăçал тата «Чувашавтодор» предприяти тăрăшнипе паянхи кун требованийĕсене тивĕçтерекен çӳп-çап тăкмалли полигонăн пĕрремĕш черетне туса пĕтерсе хута ятăмăр. Вĕсене тав çакăншăн. Кунти ĕçсене Муркашри пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх предприятийĕ йĕркелесе тăрать. Çакна валли вĕсен транспорт хатĕрĕсем те, специалистсем те çитеççĕ. Вĕсем ял тăрăхĕсемпе килĕшӳсем тăваççĕ çӳп-çап турттарас ыйтупа. Ятарлă графикпа килĕшӳллĕн ялсенчен çӳп-çап турттарма пуçлатпăр. Ку енĕпе Москакасси ял тăрăхĕ ĕçе ăнăçлă туса пырать ĕнтĕ. Кашни юн кун тăватă хутчен кунти ялсенчен турттарса тухнă çӳп-çапа. Халăх питĕ кăмăллă. Çитес вăхăтрах ытти ял тăрăхĕсенчи çырмасене, пахча хыçĕсене кăларса тăкнă тĕрлĕ ăпăр-тапăр полигона килсе выртĕ. Хамăр тăрăха пуçтарса тирпейлесен, çӳп-çапа вăхăтра пуçтарса тăрсан районăмăр татах та хитререх те илĕртӳллĕрех пулĕ. Йăлтах хамăртан килет.

**– Тавах, Владимир Германович, калаçушăн.**

**Л. ПАВЛОВА калаçнă.**

# Асфальт çинчи пахча

Строительство ветеранĕсем

***Умра – строительсен професси уявĕ. Строительство мирлĕ ĕç пулнăран уяв умĕн ĕç пурнăçне çурт-йĕр тата çулсем тăвассипе çыхăнтарнă маттур ĕçченсемпе тĕл пулма шутларăм. Пур вĕсем пирĕн хушăмăрта, пур. Вĕсен ырă ятне нумай чухне ансăр ушкăнра çеç пĕлеççĕ, анчах çав маттурсен тăрăшуллă ĕç пĕтĕмлетĕвĕпе пиншер, вуншар пин е ытларах та çын ыр курса савăнса пурăнать: çурчĕ хăтлă, ăшшине лайăх тытать, шывĕ çителĕклĕ пырса тăрать, çулĕ тикĕс те тирпейлĕ...***



Район хаçатĕнче 20 çул ытла ĕçленĕрен хамăр енри çулсене тăвас ĕçре пайтах вăй хунă Григорий Дмитриевич Лавренко пирки ыррине кăна калас килет. Унăн тăрăшуллă ĕçĕ-хĕлĕ паян та куç умĕнче. Мирлĕ ĕç çыннисен уявĕ умĕн эпĕ çул-йĕр строительствин çак аксакалĕ патне çитсе курас шут тытрăм.

Çăмăл автомашина çул пăрăнчĕкĕнчен çаврăнса «Заря» коллективлă садалла пăрăнчĕ. Вунă метр, çĕр, икçĕр... Сасă пама калаçса татăлнă пек машина кăшкăртрĕ кăна, пирĕн ума васкамасăр, хуçалла утса пирĕн юлташăмăр тухса тăчĕ. Григорий Дмитриевичăн дачине çитрĕмĕр. Машинăран тухсассăнах çывăхра çум курăк кашласа ӳсни, тĕрлĕ ăпăр-тапăр йăваланса выртни куç умне пулмарĕ. Йĕркеллĕ хуçан хула урамĕнче те, ял тăкăрлăкĕнче те, выльăх витинче те, дача таврашĕнче те тирпейлĕх малти вырăнта пулнине эпир яланах куратпăр пулсан, пирĕн паянхи тĕл пулура та вăл малти вырăнта пулчĕ.

3,4 сотка йышăнакан дача участокĕ. Пĕчĕк утма çулсăр пуçне пушă выртакан пĕр лаптăк та çук пуян пахчара. «Мĕнре-ха пуянлăх?» – ыйтĕ вулакан. Хуравĕ малалли калаçура.

Григорий – инçетри Украинăра Чернигов облаçĕнче çуралса ӳснĕ арçын. Ял ачи çулсем экономикăшăн пĕлтерĕшлине пĕчĕккĕллех ăнланнă. Çавăнпа та ĕç пурнăçĕн тĕп пайне те Григорий Дмитриевич çулсем тăвас ĕçе халалланă. Çĕр-шыв ăçта хушать – çавăнта Украина каччи çулсем тума пуçлать. 40 çул ытла хушăра пурнăç артерийĕсене çĕнетсе-çирĕплетсе тăрас тĕллевпе вăй хунă Григорий рядовой ĕçченрен участок пуçлăхĕ таран ӳссе çитет.

1940 çулхи кăрлач уйăхĕн 8-мĕшĕнче çуралнă Григорий çемьере кĕтнĕ ача пулнă. Утма пуçланăпуçламан вăрçă тути-масине туйма тивнĕ шăпăрлан нумай йывăрлăха аслисемпе тан тӳснĕ. Çулсем иртнĕ май шкулта вĕреннĕ, ятарлă пĕлӳ илнĕ, Совет Çарĕнче службăра пулнă хыççăн ĕмĕтне пурнăçлама çул тăвакан строительство организацине вырнаçса ĕçе кӳлĕннĕ.

– Мускав – Киев çул маншăн пĕрремĕш объект пулчĕ. Унта эпĕ çартан таврăннă хыççăн 1964 çул пуçламăшĕнче вăй хума пуçларăм. Тытăнтăм та тивĕçлĕ канăва тухиччен çул-йĕр тăвас ĕçре тăрăшрăм. Иртнĕ çулсемшĕн паян пĕртте ӳпкелешместĕп. Паян хамăр тунă çулсемпе иртетĕп те çынсем çăмăл автомашинăсемпе ыткăнса кăна çӳренине курса савăнатăп. Çакă мар-и-ха вăл телей? – ыйтуллăн тинкерчĕ садпа иртнĕ май манăн пĕлĕшĕм.

Улма-çырла йывăççисем айĕнче ларакан дача çурчĕ патнелле иртнĕ май 8 сорт сыпнă пан улми йывăççи айĕпе иртрĕмĕр.

– Çамрăк улмуççи тетĕп эпĕ ăна. Кăçал вăл сыпнă пур сортлă улмана та парнелерĕ. Улма спасĕ çитсен çисе пăхăпăр, – йăл кулса калаçать пахчаçă-строитель çынран çӳллĕ ӳссе кайнă Америка салачĕсем патĕнчен иртнĕ май.

– Эсир – строитель. Ăçтан-ха сирĕн пахчапа ĕçлеме вăхăчĕ? – ыйтатăп калаçăва малалла тăсса.

– Эпĕ колхозра ӳснĕ ял ачи-çке. Ялта вара пахчасăр та, выльăх-чĕрлĕхсĕр те майĕ çук. Эпĕ Чăваш Республикине 1972 çулта килтĕм. Пĕрремĕш çул Ишек – Элĕк пулчĕ. Хамăн ĕç ĕмĕрĕн ытларах пайне вара Муркаш районĕнче ирттертĕм. Кунти нумай çул çинче эпĕ пиншер çухрăм утнă ĕнтĕ. Кашни кукăр асра. Муркашра эпĕ 1976 çултанпа: ун чух Рыккакасси – Ярапайкасси автоçула тума пуçларăмăр. Хыççăн пирĕн «Дорспецстрой» Юнкăра, Отарккăпа Уйкас Янасалти, Йӳçкассинчи çулсене тăвассипе ĕçлерĕ. Нумай вăй хума тиврĕ Мăн Сĕнтĕр – Хураçка автоçула тума. Районăн кашни кĕтесĕнчех эпир тунă çулсем ял çыннисен пурнăçне çĕнĕ сăн кĕртрĕç.

– Инçетрен килнĕ строителĕн пахчапа ĕçлеме вăхăчĕ ăçтан тупăннă-ха? – тĕпчетĕп малалла.

– Ял ачи урăхла пултараймасть. Чăваш Ене килсенех май килнипе дача валли çĕр лаптăкĕ туянтăм. Пушă вăхăтра унтан тухмасăр ĕçлесе паянхи сада çĕклерĕм. Паян манăн кунта улмуççисем те, пахча çимĕç те, çĕр улми те пур. Пахча çимĕçпе ăнăçлă ĕçлеме эпĕ пĕрремĕш çул мар ĕнтĕ икĕ парник тытатăп. Кусемпе пĕрлех манăн дача лаптăкĕнче «Великан» ăратлă кроликсем, чăхчĕп, вĕлле хурчĕсем пур, – хуравларĕ Григорий Дмитриевич дача хĕррипе парниксем хыçĕнче вырнаçнă 7-8 вĕлле еннелле аллипе кăтартса.

– Пĕрремĕш вĕллесенчен пыл юхтартăм ĕнтĕ. Пыл хурчĕсем манăн строитель пурнăçĕнче 1980 çултанпа.

– Эсир – çул-йĕр тăвакан. Çав вăхăтрах пуян опытлă пахчаçă та. «Асфальт çинчи пахча», - тесе хаклас килет манăн сирĕн пурнăçăра паянхи кун шайĕнчен пăхсан.

– Темĕнле калатăр ĕнтĕ, анчах эпĕ хамăн пурнăçăмра çынсен ыйтăвĕсене туллин татса парассипе тăрăшнă хушăрах хамăн чун çимĕçĕ пирки те самантлăха манман. Дачăри килти хушма хуçалăх – манăн чун канлĕхĕ. Кроликсем валли пĕр михĕ курăк çумласа килетĕп те вĕсене апатлантарса ĕçри йывăрлăхсенчен сирĕлетĕп. Пыл хурчĕсемпе «калаçатăп» та хама валли çĕнĕлĕхсемпе малашлăх ĕмĕтсем тупатăп. Дачăпа юнашар хам вăйпа тунă çăлтан шыв илетĕп те чунăм канлĕхне туятăп. Çакă мар-и-ха вăл пурнăçри телей? – каллех ыйтуллăн тинкерчĕ ман куçран Григорий Дмитриевич.

...Телей. Ăслă çынсем каларăшĕнче телее çын ĕçе юратса кайни тата киле кăмăлпа таврăнни тесе хаклаççĕ. Манăн юлташăмăн Григорий Дмитриевич Лавренкон вĕсем пур. Кун çумне юратнă мăшăрĕ ĕçре те, дачăри ĕç-хĕлте те пулăшнине, ывăлĕпе хĕрĕ ашшĕамăшĕн ятне яманнине, вĕсем 3 мăнук парнеленине хушсан урăх мĕн кирлĕ тулли пурнăçпа пурăнас текене?

**Анатолий БЕЛОВ.**

# Тĕреклĕ ферма çеç тупăш парайрать

Юсав ĕçĕсем – çитес хĕл валли

***Шăрăх çу кунĕсем тăраççĕ. Анчах ыранхи куна пăхма, пуласлăха шута хума пĕлекенсем паянах çитес хĕл пирки шутлаççĕ. Ку вара хуçалăх экономикин тĕрекĕ пулнине, хуçалăхра ĕçлекенсем ыранхи кунпа пурăннине çирĕплетет.***



***Строительсен бригади хăйсен объектĕнче.***

– Урăхла юрамасть. Хуçалăх ертӳçисем малашлăх пирки шутланине пирĕн хамăр ĕçпе тӳрре кăларас пулать. Çав тĕллевпе ĕçлетпĕр те. Кулленех пирĕн строительство бригадине вунă çынна яхăн ĕçе тухать. Пĕрле пулсан вара ĕç ăнать. Акă нумаях пулмасть хăтсăр курăнса ларнă сысна сарайĕн стенине сăн кĕме пуçларĕ. Ĕç вырăнтан тапранни сисĕнет те ăна вĕçне çитерессипе ĕçлетпĕр, – терĕ пĕчĕк прицеп çине кирпĕч тиенĕ май «Свобода» хуçалăхри стройбригада бригадирĕ Николай Архипов.

Николай Витальевич тăван хуçалăхри строительство бригадинче 1984 çултанпа. 18 çула яхăн ĕнтĕ вăл – бригадир. Ĕçленĕ çĕрте пуян опытлă строительсем татах пур. Вĕсем: И. Поликарпов, А. Федоров, И. Майков, А. Любимов. Аслисене кура çамрăксем те вĕсенчен юлмаççĕ. В. Никитин, М. Толикин, А. Любимов, А. Никитин çуллахи каникул кунĕсене строительсемпе ĕçлесе ирттереççĕ.

Пĕрлĕхре – вăй. Сысна фермин кивелнĕ стени кунсерен юсанса, çĕнелсе пырать.

**А. ПЕТРОВ.**

# Вĕренӳ çулне хатĕр

## Шкул хыпарĕсем

***Шкула каймалли кунсем çитиччен вăхăт пĕр уйăхран та каталчĕ. Шкулсенче вĕренӳ çулĕ тĕлне юсав ĕçĕсем туса иртттереççĕ, çĕнĕ кадрсем шыраççĕ. Пĕтĕмпех ачасем валли вĕт.***

***Хатĕр-ши шкулсем çĕнĕ вĕренӳ çулне пуçлама? Хуравне тупма хам вĕреннĕ Чуманкасси шкулне çул тытрăм. Картишне кĕнĕ-кĕмен ачасен сассине илтрĕм. Кунта – çуллахи практикăна килнĕ тата районти ĕçпе тивĕçтерекен центр урлă ĕçлекен яшсемпе хĕрсем. Шкул директорĕ В.М. Васильев юнашарахчĕ, ачасене ĕç йĕркипе паллаштаратчĕ. Ман валли пушă вăхăт тупса шкул пурнăçĕ çинчен каласа пачĕ:***



– Çурла уйăхĕн 5-мĕшĕнче пирĕн шкула çĕнĕ вĕренӳ çулне мĕнле хатĕрленсе çитнине тĕрĕслеме комиссии килчĕ, лайăх хак пачĕ. Унччен вара вак-тĕвек ĕçсене вĕçлерĕмĕр. Вĕренӳ пӳлĕмĕсене сăрласа çĕнетнĕ ĕнтĕ, пĕр класра чӳрече рамисене улăштартăмăр. 3-мĕшпе 4-мĕш классем кăçалтанпа шкул çуртĕнче вĕренме тытăнаççĕ. Унччен кĕçĕн классенче вĕренекенсем «Малыш» ача садĕнче ăс пухнă. Исетерккĕ шкулĕ хупăннă май унта вĕреннĕ ачасем те Чуманкасси шкулне çӳреме пуçлаççĕ. Вĕсем 16-ăн.

Шкулти юсав ĕçĕсене туса ирттернĕ çĕрте ашшĕ-амăшĕсем те тăрăшрĕç. В.В. Тихонова, А.А. Тихоновăна, С.Л. Николаевăна, Т.З. Прокопьевăна, И.Г. Васильевăна, С.Е. Кадыковăна, Н. Матвеевăна, В. Ефимова т. ыт. те питĕ пысăк тав сăмахĕ калатăп.

Çĕнĕлĕхсем пирки çавна асăнмалла. Медицина тата ашшĕ-амăшĕн пӳлĕмĕсене усма хатĕрлерĕмĕр. Ачасен сывлăхĕ шкулшăн ялан малти вырăнта. Медицина кабинетĕнче Э.Н. Хрусталева вăй хума пуçлĕ. Ашшĕ-амăшĕн пӳлĕмĕнче вара шкул психологĕ Г.Э. Васильева ашшĕ-амăшĕсене интереслентерекен ыйтусем çине хуравсем парĕ.

Шкулта акăлчан чĕлхипе, информатикăпа вĕрентекенсен вырăнĕсем пушă. Кăçал 7 учитель пĕрремĕш категори илме заявлени пачĕ. Авăн уйăхĕн 1-мĕшĕнчен хавхалантарса ĕçлемелли ĕç укçи хăпарни пирки каласа хăварма пулать. Çурла уйăхĕн 9-мĕшĕнчен пуçласа профиль лагерьне 50 ача çӳреме пуçлĕ.

2003 çулта ачасене илсе çӳреме панă шкул автобусĕ паянхи куна Кӳкеçре юсавра. Шел пулин те, ăна юсаттармашкăн укçи-тенки çитеймест. Район администрацийĕ пулăшасса шанатпăр.

Саванăçлă хыпар килсе çитрĕ пирĕн пата. Чуманкасси шкулĕнче вĕреннĕ Вера Соколова Барселонăра иртнĕ Европа чемпионатĕнче хăвăрт утассипе 3-мĕш вырăна тухса пăхăр медале тивĕçнĕ. Çак ырă хыпар пире те çунатлантарать, çĕнĕ çитĕнӳсем тума пулăшать.

**Ольга ПАВЛОВА,**
**ЧПУ студентки.**

**Сăн ӳкерчĕкре: шкул директорĕ юнашар чухне вăй-хал тата хушăнать.**




* * *

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:170203:69, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Сятракасинское сельское поселение, участок расположен в северо-восточной части кадастрового квартала 21:17:170203, для ведения личного подсобного хозяйства, площадью 6000 кв. м.

Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.

* * *

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:170203:62, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Сятракасинское сельское поселение, участок расположен в северо-восточной части кадастрового квартала 21:17:170203, для ведения личного подсобного хозяйства, площадью 6000 кв. м.

Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.

* * *

**Молодая семья купит жилой дом в черте с. Моргауши. Тел.: 8-927-845-24-79. Сергей.**

* * *

**Продается прошлогоднее зерно, пшеница. Тел.: 8-905-027-81-99.**

* * *

**Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Изготовим на заказ: срубы, беседки любого размера. Цена договорная, доставка по району бесплатно.**
**Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-656-13-84. 3-5.**

## Юлашки çула ăсатма пулăшнăшăн

# Тав тăватпăр

Пирĕн юратнă çыннăмăра, ывăла, мăшăра, аттене, шăллăма, тăвана Юрий Анатольевич Ершова хисеплесе юлашки çула ăсатма пынă, йывăр хуйха пирĕнпе пĕрле пайланă Муркаш çыннисене, Юнкăпуç ял халăхне чĕререн тав тăватпăр.

**Амăшĕ, мăшăрĕ, ачисем, аппăшĕсем, тăванĕсем.**




Кадастровым инженером ООО «НПП «Инженер», адрес: Чувашская Республика, г. Чебоксары, ул. Декабристов, д. 33а, ingenercheb@va.ru, тел.: 28-06-06 выполняются кадастровые работы по выделу земельных участков в счет доли в праве общей собственности на земельный участок из состава земель сельскохозяйственного назначения, расположенного в Чувашской Республике, Моргаушском районе, на территории СХПК им. Кирова, поле № 1, центральная часть кадастрового квартала 21:17:200701.

Заказчиками кадастровых работ являются Григорьев Николай Димитриевич, Григорьева Зинаида Петровна, проживающие по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, д. Сюлово, ул. Колхозная, д. 31.

Собрание заинтересованных лиц по поводу согласования местоположения границ состоится по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Тораево, ул. Базарная, д. 5, здание сельской администрации, «07» сентября 2010г. в 11 часов.

С проектом межевых планов земельных участков можно ознакомиться по адресу: Чувашская Республика, г. Чебоксары, ул. Декабристов, д. 33а, офис 303.

Возражения по проекту межевых планов и требования о проведении согласования местоположения границ земельных участков на местности принимаются с «16» августа 2010 г. по «31» августа 2010 г. по адресу: 428022, Чувашская Республика, г. Чебоксары, ул. Декабристов д. 33 а, офис 304.

Смежные земельные участки, с правообладателями которых требуется согласовать местоположение границ: участки, находящиеся в общей долевой собственности на территории СХПК им. Кирова (поле № 1), земли Тораевского сельского поселения. участок 21:17:200701:320.

При проведении согласования местоположения границ при себе необходимо иметь документ, удостоверяющий личность, а также документы о правах на земельный участок.

## Пĕлтерӳсем. Объявления

**Продаю пиломатериал обрезной (хвоя), листы оцинкованные, профнастил, цемент, шифер. Адрес: с. Моргауши, магазин «Рука мастера». Тел.: 8-903-346-40-58. 3-5.**

* * *

**Керамзитобетонные блоки, щебень гранитовый, известковый, керамзит, гравмасса, песок речной, карьерный строительный, торф, с доставкой.**
**Тел.: 8-906-383-65-13, 8-903-389-98-62. 5-8.**

* * *

**Продаю керамзитобетонные блоки, песок, гравмассу, бой кирпича с доставкой.**
**Тел.: 8-905-347-99-15, 87-66-95. 5-5.**

* * *

**Срубы банные (хвоя, липа) в наличии и на заказ. Пиломатериалы (хвойные, лиственные) в наличии и на заказ. Печки банные. Тел.: 8-927-667-60-61, 8-927-846-01-08 3-10.**

* * *

**Организация продает щебень, песок, гравмассу (ОПГС), железобетонные изделия, асфальт. Возможна доставка. Тел.: (8352)57-42-81, 57-33-83, 8-903-358-36-23. 7-8.**

* * *

**Продаю: кирпич одинарный М-100; М-125; М-150; керамический полуторный М-125; двойной керамический; силикатный белый, желтый; КББ р-р 20х20х40; красный половняк, некондиция, гравмассу, керамзит. Доставка и разгрузка на манипуляторе. Документы.**
**Тел.: 8-903-358-20-97, 8(8352) 44-20-97. 6-9.**

* * *

**Магазин «Лотос» (д. Рыккакасы) реализует: профнастил оцинкованный – 210 руб. за 1 пог. м.; профнастил крашеный – 250 руб. за 1 пог. м.; профиль 40х20 – 50 руб. за 1 пог. м.; трубы для столбов на ограду, диаметром 60 мм, толщиной 5 мм – 120 руб. за 1 пог. м.; стека-рабица – от 500 рублей (10 метров в рулоне). Тел.: 8-917-665-27-26. 3-5.**

* * *

**Продаем торф, навоз, грунт, ОПГС, песок, щебень, асфальт с доставкой в короткие сроки. Оказываем автоуслуги. Тел.: 44-22-24, 8-905-343-91-07. 1-2.**

* * *

**Строительная фирма набирает рабочих строительных специальностей: штукатуров-маляров, каменщиков, отделочников, кровельщиков, разнорабочих и т.д. Жилье и спецодежда предоставляется бесплатно. Зарплата от 750 до 1500 руб. в день. Зарплата стабильная. Работа на гособъектах РФ. Прямой работодатель. Тел.: 8-926-77-66-955 или 8-927-844-97-92. Алексей. 2-5.**

* * *

**Продаю озимую пшеницу 6 руб. за 1 кг..**
**Тел.: 8-905-343-91-07, 44-22-24.**

* * *

**13 августа с 8-00 до 18-00 часов Ульяновская обувная фабрика проводит выставку-продажу обуви из натуральной кожи Ульяновской, Белорусской фабрик и других российских производителей. 1-2.**

* * *

**Требуется ответственный, коммуникабельный продавец на рынок. Одежда. Тел.: 8-927-862-01-98.**

* * *

**Требуются продавцы. Тел.: 8-927-666-93-93.**

* * *

**Сентябрь вĕçĕнче пăруламалли хĕрлĕ тынашка сутатпăр. Тел.: 8-927-850-17-62.**

* * *

**Сниму однокомнатную квартиру в с. Моргауши.**
**Тел.: 8-927-843-83-24.**

* * *

**Продается прицеп в хорошем состоянии. Звонить по номеру: 8-906-134-27-50.**

* * *

**ПРОДАЮ КОМПЬЮТЕРЫ К 1 СЕНТЯБРЯ. ДЕШЕВО. Тел.: 46-39-33, 8-902-287-39-33. Олег. 1-2.**

Мăн Сĕнтĕр шкулĕнче пĕрле ĕçленĕ тус-юлташĕсем

**Юрий Анатольевич**
**ЕРШОВ**

вăхăтсăр вилсе кайнă пирки тăванĕсемпе пĕрле тарăннăн хурланни çинчен пĕлтереççĕ.

Администрация Моргаушского района выражает глубокое соболезнование депутату районного Собрания депутатов, директору ОАО «Птицефабрика «Моргаушская» Ванеркину Н.Г., его родным и близким, по поводу безвременной кончины брата

**ВАНЕРКИНА**
**Анатолия Григорьевича.**

Коллектив ОАО «Птицефабрика «Моргаушская» выражает искренне соболезнование генеральному директору Ванеркину Н.Г. в связи с тяжелой утратой – кончиной брата

**ВАНЕРКИНА**
**Анатолия Григорьевича.**

Чăваш Республикин Сывлăха сыхлас ĕç тата социаллă аталану министерствин Муркаш районĕн халăха социаллă хӳтлĕх паракан пайĕ тата социаллă пулăшу паракан центрĕ директорĕн О.В. Ивановăн ашшĕ

**Василий Андреевич**
**СТУПИН**

вилсе кайнă пирки тарăннăн хурланни çинчен пĕлтереççĕ.

## Прогноз погоды с 7 по 13 августа

www.yandex.ru

| сб 7 | вс 8 | пн 9 | вт 10 | ср 11 | чт 12 | пт 13 |
|---|---|---|---|---|---|---|
| ясно | переменная облачность | ясно | переменная облачность | переменная облачность | ясно | ясно |
| +38 | +39 | +39 | +40 | +34 | +29 | +26 |
| +20 | +20 | +23 | +21 | +17 | +12 | +10 |

* * *

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли населенных пунктов» с кадастровым номером 21:17:080301:200, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Юнгинское сельское поселение, д. Сярьмыськасы, ул. Полевая, для строительства гаража, площадью 39 кв. м.

Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.


Муркаш районĕнчи
«Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат

УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:
Чăваш Республикин Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерстви.
ЧР Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерствин «Муркаш районĕн «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕ» автономи учреждениĕ.

Тĕп редактор А.И. ТИХОНОВ.

АДРЕС: 429530, Чăваш Республики, Муркаш ялĕ, Мир урамĕ, 9А çурт.
ТЕЛЕФОНСЕМ: тĕп редактор - 62-1-36, яваплă секретарь - 62-2-82, бухгалтери - 62-1-35, пайсем: общество пурнăç пайĕ - 62-2-82, экономика тата социаллă пурнăç пайĕ - 62-1-38.
Факс: 62-1-36; E-mail: morpress@cbx.ru, redaction@cbx.ru

Çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникаци сферине пăхса тăракан Федераллă службăн Чăваш Республикипе – Чăваш Енпе ĕçлекен управленийĕ 2009 çулхи раштавăн 7-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00073 № регистрациленĕ.

Калăпăшĕ 1,5 пичет листи.
Ал çырăвĕсене рецензилемеççĕ, каялла тавăрса памаççĕ, 2 страницăран пысăкраххисене йышăнмаççĕ.
Рекламăна пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.

ИЗДАНИ ИНДЕКСĔ: 54822.
Хаçат чăвашла юн тата шăмат кунсерен тухать.
Номер дежурнăйĕ Шапошников В.Л.
Пичете панă 06.08.2010 ç.
Пичете памалли вăхăт: графикпа – 17 сех. 20 мин, чăннипе – 17 сех. 20 мин.
Заказ Тираж 3989.